


Нарăсăн 7-мĕшĕнче Сочире пуçланакан хĕллехи Олимп вăййисене пурте чăтăмсăррăн кĕтеççĕ. Чăваш Ен те тĕнчери чи пысăк ăмăртăвăн пĕр пайĕ пулса тăчĕ, çакă чăваш хĕрĕн Сильвия Петровăн ячĕпе уйрăмах çыхăннă.

Сăлтавне пурте пĕлеççĕ: вăл илемлĕ, шурă мулкач ӳкернĕ. 2011 çулта унăн ĕçĕ Пĕтĕм Раççейри конкурсра çĕнтерсе Олимп талисманĕ пулса тăнă. Паян эпир кăна мар, пĕтĕм тĕнче унăн мулкачне пĕлет. Мамăк пек çемçескер, чиперскер кашни çын чунĕнче ăшă туйăм вăратать, хăйĕн пысăк та илĕртӳллĕ куçĕсемпе ырă та çĕкленӳллĕ кăмăл парнелет.

Мӗнле чӗр чун-ха вӑл? «Мулкач - хӗллехи вӑрманӑн хастарӗ. Тусӗсем унран ялан тӗлӗнеҫҫӗ: пур ҫӗре те вӑл мӗнле ӗлкӗрет-ха? Мулкач Вӑрман академийӗнче те лайӑх паллӑсемпе вӗренет, ҫемьен «Вӑрман кӳлли» апатланмӑшӗнче те амӑшне пулӑшать, спорт ӑмӑртӑвӗсенчен те юлмасть. Нимӗнле вӑрттӑнлӑх та ҫук унӑн. Мулкач сывӑ пурнӑҫ йӗркине пӑхӑнать тата спортпа туслӑ, ҫавӑн пекех вӑл юрра-ташша питӗ ӑста», - ҫырнӑ «Сочи-2014» талисманӗ ҫинчен.

Мулкач авторӗ пирки эпир мӗн пӗлетпӗр-ха? Тӑвай районӗнчи Ҫӗнӗ Пуянкассинче кун ҫути курнӑскер унти тавралӑх хӳхӗмлӗхӗпе киленсе ӳснӗ, ҫавӑнпах ҫут ҫанталӑк ӑна ӳнерҫӗ ӑсталӑхне панӑ. Виҫӗ ҫул каялла ялти вӑтам шкулта 11-мӗш класра вӗренекен хӗр шурӑ хут ҫине ӳкернӗ мулкач Олимп ҫӑлтӑрӗ пуласса шухӑшламан паллах. «Унӑн сӑнӗ ӑнсӑртран ӳкерӗнчӗ, ҫапларах е капларах пултӑрччӗ тесе тӗлленмен. Кӑшт хитрелетнӗ хыҫҫӑн копи турӑм та конкурса ярса патӑм», - аса илет Сильвия. Ун чухне вӑл ытти конкурсантпа пӗрле Сочире пулса курнӑ, вӗсене Йӗркелӳ комитечӗн ертӳҫисем тӗрлӗ парнепе чысланӑ, ҫавӑн пекех Олимпиада уҫӑлнине килсе курма ирӗк паракан сертификат панӑ. Тӗрлӗ конкурсра палӑрнӑ тата общество пурнӑҫне хастар хутшӑннӑ маттур хӗр ҫав ҫулах Чӑваш Ен Президенчӗн стипендине тивӗҫнӗ.

Пӗчӗклех ӳкерме юратаканскер паян та кашни кун аллине кӑранташ тытать. Тус-тантӑшне портретсем калӑпласа савӑнтарать, мультфильмсенчи сӑнарсем унӑн ӳкерчӗкӗсенче уйрӑмах ӑнӑҫлӑ. Вӑл яппунсен аниме мелӗпе кӑсӑкланнине те пӗлетпӗр. Шӑп ҫавнашкал ӳкерчӗксем кун ҫути кураҫҫӗ те ӗнтӗ чӑвашсем юратса вулакан «Капкӑн» журналта. Тӗнчипе паллӑ мулкача вара хӗр тӗрлӗ енлӗ ӳкерме пултарать: акӑ шурӑ чӗр чун шарфпа е шлепкепе, акӑ йӗлтӗр сырса старта тухас пек, конверт ҫинче вӑл кӑвак хӑюпа... Хальхи вӑхӑтра Сильвия Петрова Чӑваш патшалӑх университечӗн журналистика уйрӑмӗнче виҫҫӗмӗш курсра вӗренет. Журналист ӗҫне суйласа илнӗ пулин те студентка уйрӑмах математика занятийӗсене кӑмӑлланине палӑртать. Ҫамрӑк художник дизайн енӗпе пӗлӳ илме те ӗмӗтленет. Спортпа туслӑ Тӑвай хӗрӗ халӗ «Йӗлтӗр йӗрӗ» ӑмӑртӑва хутшӑнма хатӗрленет. Унтан вӑл Сочие ҫула тухӗ. Ҫавӑн пекех унӑн аллинче - тӗрлӗ турнира ҫитсе курмалли 5 билет. Вӑл биатлонҫӑсен тата конькипе эрешлесе ярӑнакансен тупӑшӑвӗсене курас тӗллевлӗ.

Ҫак кунсенче И.Н.Ульянов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх университечӗн ректорӗ Андрей Александров Сильвия Петровӑпа /сӑн ӳкерчӗкре/ тӗл пулнӑ, Сочие кайса килме телейлӗ ҫул суннӑ. Студентка университет музейне Олимп талисманне парнеленӗ.

**Андрей МИХАЙЛОВ.**

**Геннадий ВЕРБЛЮДОВ**

**сӑн ӳкерчĕкĕ**